Ыран - РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

102 (7527) № * Шăмат кун, 2007 çулхи декабрĕн (чӳк) 1-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Наци проекчĕн витĕмлĕхĕ куç кĕрет

## Районта çемье тухтăрĕн çиччĕмĕш уйрăмĕ уçăлчĕ



Пурнăç майĕпен-ерипен ырă еннелле туртăнни курăнать. Çакна вара чылай ĕç-хĕл çирĕплетет: ялсенче çул-йĕр сарăлать, ачасене шкул автобусĕ турттарать, медицина аталанать, патшалăх çăмăллатнă кредитсем уйăрать тата ыттисем те. Çаксем пурте наци проекчĕсен тĕллевлĕ программисемпе килĕшӳллĕн пурнăçланса пыраççĕ.

Районта çемье тухтăрĕн пĕрремĕш уйрăмĕ уçăлсан, çакă ыттисемшĕн ăмсанулла пек туйăнатчĕ. Мĕншĕн тесен сывлăх тĕлĕшпе пăтăрмах пулса тухсан, район центрне çитмесĕрех, пĕрремĕш пулăшăва кунтах тивĕçтерме пултараççĕ. Çакă ял çыннисемшĕн питĕ меллĕ. Çавăнпа та ку енĕпе яваплă органсем тата "Сывлăх" наци проекчĕн витĕмĕсем самай сисĕнчĕç. Ноябрĕн 29-мĕшĕнче вара Юнкă ялĕнче çемье тухтăрĕн уйрăмĕ уçăлчĕ. Ку уйрăм районта çиччĕмĕш пулчĕ. Юнкă ял тăрăхĕнче пурăнакансене çакăн йышши уйрăма уçасси тахçанах пăшăрхантарнă. Вĕсем аяккарах вырнаçни те çул çине тухса çӳреме самай чăрмав кӳрет. Халĕ вара ял çыннисен хумханăвĕ самай уçăмланчĕ.

Çак кун хăйне май уяв пулчĕ, ял-йыш, хăнасем пухăнчĕç. Савăнăçлă саманта ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов уçрĕ. "Çемье тухтăрĕн уйрăмĕсем уçăлни питĕ кирлĕ. Çакна вара ытти уйрăмсен ĕçĕсем те çирĕплетеççĕ. Çавăнпа та çын сывлăхĕ чи хакли, чи кирли пулнине тĕпе хурса, сирĕн тăрăхри çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме май тупрăмăр. Кунта вара "Сывлăх" наци проекчĕн, район администрацийĕн ырă витĕмĕсене асăнмалла", – терĕ вăл.

Çавăн пекех район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ, малашне те пĕрпĕрне ăнланса ĕçлесе пымаллине палăртрĕ. Хĕрлĕ хăйăва касса уйрăм уçăлнине пĕлтерчĕ. Хăнасем йышлăн килсе çитрĕç, пурте асăнмалăх парнесем пачĕç.

Юнкă ял тăрăхĕ сакăр яла пĕрлештерет. Халăхăн пĕтĕмĕшле йышĕ 2135 çынпа танлашать, вăл шутра аслă ăрурисем 1735-ĕн. Çемье тухтăрĕн уйрăмне 150 пин тенкĕлĕх оборудовани кӳрсе килнĕ. Çитес вăхăтрах кунта машина, холодильник, чĕре тĕрĕслеттермелли тата ытти хăш-пĕр оборудовани çитмелле. Уйрăмра 6 медицина ĕçченĕ вăй хурать. Унăн ертӳçи – Людмила Алексеевна Ермакова. Вăл медицина ĕçĕнче пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ, 1994 çултанпа ача-пăча врачĕ пулса тăрăшать. Вăл та хăйĕн савăнăçне пытармарĕ. "Халĕ кунта выртса сипленме икĕ вырăн пур. Çакă аякран килекенсемшĕн уйрăмах меллĕ. Хăш-пĕр процедурăна тухнă хыççăн утма юрамасть-çке. Тата ав еплерех çĕнĕ йышши оборудованисем кӳрсе килчĕç, йăлтах сывлăх валли вĕт. Сывлăх хавшаса çитессе вара кĕтмелле мар, ун пирки малтанах тăрăшмалла", – терĕ вăл.

Çавăн пекех аслă ăрурисем те ырă пулăмпа питĕ кăмăллă пулчĕç. Кунтах шăл юсаттарма та, тĕрлĕ сиплев курсĕ иртермe те пулать. Шкул ачисем те кĕтнĕ хăнасем пулĕç. Сывлăха мĕн ачаранах упрамалла вĕт.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: çĕнĕ уйрăм вата çынсемшĕн уйрăмах меллĕ.**

Республикăра

## Федераллă центр çĕкленет



ЧР сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министрĕ Нина Суслонова РФ Президенчĕ çумĕнчи наци проекчĕсене пурнăçлас ыйтупа ĕçлекен Канаш президиумĕнче тухса калаçнă. Вăл Шупашкарта çĕкленекен травмотологи, ортопеди тата протезсем лартакан федераллă центра тăвас ĕçсем епле пынине пĕлтернĕ.

Ку центр çĕршыври 8 региона пысăк технологиллĕ пулăшу парĕ. 48 врачпа 125 медработника кунта ĕçлеме ятарласа вĕрентнĕ.

Федераллă центрта çуллен 6 пин операци тума палăртаççĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре: çапла курăнать çĕнĕ центр.**

Правительствăра

## Ĕçлекен çынсен сывлăхне упрама

ЧР Министрсен Кабинечĕ 2008-2010 çулсенче республикăра ĕçлекенсен ĕç условийĕсене, ĕç сыхлавне тата сывлăхне лайăхлатасси тĕллевлĕ программăна сӳтсе явнă.

Вăй питти çынсем вилесси чакнă пулин те çак кăтарту пысăк-ха. Сăлтавĕсем – инкексем, суранланни, наркăмăшланни тата ытти пăрахăçа кăларма май пур сăлтавсем.

Çавăнпа пĕрлех производствăра суранланасси чакса пырать. Юлашки вунă çулта производствăра вилнисен хисепĕ 2 хут, инкек тӳснисен 4 хута яхăн чакнă.

Ятарлă программăна йышăнни производствăра суранланассине тата чирлесе каяссине чакарма, ĕç условийĕсене, ĕç сыхлавне тата ĕçлекенсен сывлăхне лайăхлатма май памалла.

Программа çак ĕçсене палăртать:

– республикăри сиенлĕ тата хăрушă условиллĕ ĕç вырăнĕсен реестрне хатĕрлемелле;

– ĕç сыхлавне тата условийĕсене мониторинг тумалли автоматизациленĕ системăна вăя кĕртмелле;

– ĕç вырăнĕсене аттестацилессине тата ĕç сыхлавне вĕрентессине аталантармалла, çакна патшалăх тата общественноç енчен контроллессине вăйлатмалла;

– ĕçлекенсем чирлессине асăрхаттарас тата производствăра инкек тӳснисене реабилитацилес системăна çĕнетмелле.

Çакăн йышши программăсене районсен шайĕнче те йышăнаççĕ.

Сăмах – район пуçлăхне

## Йăлтах хамăртан, хамăр тунă утăмсенчен килет

*2007 çулăн юлашки уйăхне кĕтĕмĕр. Çак вăхăтра, мĕн тунине куç умне кăларса, çитес çул пурнăçламалли ĕçсене палăртатпăр. Пирĕн районшăн 2008 çул уйрăмах палăрмалă çулталăк пулĕ. Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн Республика кунне пирĕн районта ирттерме йышăннă.*

*Чăвашсен вара ырă йăла пур: хăна-вĕрле пуçтариччен пӳрт-çурта, картишне, пахчана тирпейлетпĕр. Республика кунĕнче пирĕн района Раççейĕн тĕрлĕ регионĕсенчен çеç мар, ют çĕршывсенчен те хăнасем йышлăн килеççĕ. Апла пулсан хамăрăн тăван килĕмĕре – хамăр района – пирĕн хамăрăнах – йĕркене кĕртсе çитермелле. Республика кунне хатĕрленсе туса ирттермелли ĕçсем çинчен калаçрăмăр та район пуçлăхĕпе Ю.А. ИВАНОВПА.*

**– Юрий Александрович, Республика кунне йăпăр-япăр кирек хăш районта та ирттермеççĕ. Çак пысăк уява Муркаш тăрăхĕнче ирттерме йышăнни пирки Эсир мĕн шутлатăр?**

– Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн Республика кунне пирĕн районта ирттерме йышăнни çинчен калакан Указĕ, чăннипех те, пире чыс кӳрет. Çавăн чухлĕ йышлă тата сумлă хăнасем умĕнче республикăн сăн-сăпатне шăпах пирĕн кăтартмалла тесе йышăнчĕç пулсан, республика пире шанать, пирĕн ку таранччен тунă ĕçсене хаклать. Апла пулсассăн пирĕн тивĕç – шанăçа тӳрре кăлармалла. Малалла тата та тăрăшарах вăй хумалла.

Чăннипех те, ку таранччен, хисеплĕ ентешĕмĕрсем, эпир пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлерĕмĕр. Ыйтусене пĕрле татса патăмăр. Тавах сире пурне те çавăншăн. Республика та курчĕ çакна: чăвашсен чи аслă уявне пирĕн патра ирттерме йышăнчĕ. Ку мĕн çинчен калать? Пирĕн района хушма инвестици килесси, Муркаш районĕн аталану çулĕсем тата та анлăланасси çинчен. Культура çыннисемпе пĕрле уява тĕрлĕ шайри бизнес представителĕсем килеççĕ. Çапла майпа пĕр-пĕринпе хутшăнса ĕçлеме майсем уçăлаççĕ. Апла пулсан республика Президенчĕн шанăçне тӳрре кăларасчĕ, çакă декабрĕн 2-мĕшĕнче эпир мĕнле активлăх кăтартнинчен те курăнать. Çавăнпа та хамăрăн республика умĕнче те, çĕршыв умĕнче те хамăрăн тивĕçе çӳлте тытасчĕ, кашни утăма район, республика, Раççей аталанăвĕшĕн тăвасчĕ. Çĕршывăмăрта тăнăçлăх пулсан, вăл вăйлă пулсан, районăмăр малалла та ăнăçлăн аталанĕ. Йăлтах хамăртан килет. Хамăр мĕнле тăрăшнинчен. Республика кунне хатĕрленсе ирттермелли ĕçсем кăна мĕн чухлĕ пирĕн.

**– Чи малтан мĕнрен пуçламалла хатĕрленӳ ĕçне?**

– Тирпей-илемрен. Тĕрĕсрех каласан, хамăртан. Ытти çĕршывсенче урамра ниçта та нимĕн те йăваланса выртмасть. Кăна районта пурăнакансем хăйсемех лайăх пĕлеççĕ. Тирпей-илем – кулленхи пурнăçăн пĕр уйрăлми пайĕ пулса тăрать вĕсенче. Пирĕн вара, чăвашсен, ку енĕпе кăшт урăхларах лару-тăру: килте мĕн кирлĕ мар, йăлтах урама тухса пăрахатпăр. Республика кунне ирттернĕ Елчĕк районĕнче пулса куртăмăр нумаях пулмасть. Унта ку ыйтăва татса панă.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).

Официально

## Проекты бюджетов сельских поселений одобрены

Участники публичных слушаний по проектам бюджетов сельских поселений Моргаушского района на 2008 год одобрили проекты бюджетов сельских поселений Моргаушского района на 2008 год. Собраниям депутатов сельских поселений рекомендовано принять проекты бюджетов сельских поселений Моргаушского района на 2008 год в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации, Чувашской Республики и Устава сельского поселения.

**Рекомендации приняты участниками публичных слушаний 26, 27, 28 ноября 2007 г.**

Ыран – суйлав

## Суйлава хутшăнмасăр ан юлăр

*Ыран – РФ Патшалăх Думин пиллĕкмĕш созывĕн депутачĕсен суйлавĕ. Суйлава хутшăнасси – граждансен Конституципе пăхнă прави, çавăнпа пĕрлех гражданла тивĕçĕ те. РФ Патшалăх Думин депутачĕсемсĕр пуçне уйрăм округсенче депутатсен районти Пухăвĕн тата ял тăрăхĕсенчи депутатсен Пухăвĕсен депутачĕсене те суйламалла. Çак тата суйлавпа çыхăннă ытти ыйтусем çинчен каласа пама ыйтрăм та элĕ район администрацийĕн йĕркелӳпе кадр, право ыйтăвĕсемпе тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай ертӳçинчен Л.Ю. ТАРАСОВАРАН.*

**– Лилия Юрьевна, суйлав кунĕнче миçе суйлав комиссийĕ ĕçлет районта?**

– Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе районта 51 суйлав участокне йĕркеленĕ. Участокри комиссисенче татса пама право пур саслă 326 член ĕçлет. Суйлав комиссийĕсем пурте хăйсен ĕçне саккунпа килĕшӳллĕн туса ирттерме хатĕр. Вĕсенче суйлав бюллетенĕсем кирлĕ чухлĕ пур.

Çакна палăртмалла, пĕтĕмпе районĕпе 26391 суйлавçă. Вĕсенчен суйлава пĕрремĕш хут хутшăнакансем – 593-ĕн. Суйлава чи пĕрремĕш хут хутшăнакан çамрăк граждансене пурне те асăнмалăх парнесем парĕç. Суйлава пур çĕрте те уяв пек ирттерме палăртнă. Сутуилӳ предприятийĕсем ĕçлĕç. Çавăн пекех художество пултарулăх коллективĕсем хăйсен концерт программисемпе суйлава хутшăнакансен кăмăлне çĕклĕç.

**– Енчен те суйлавçăсем хăйсем пропискӑра тăракан вырăнта пулмасан, вĕсен мĕнле йĕркепе сасăламалла?**

– Маларахах çак кун хăйсен суйлав участокне кайса сасăлайманни çинчен пĕлнĕ суйлавçăсене хăйсем çак кун пулакан вырăнта суйлава хутшăнма ирĕк паракан ятарлă талонсем панă: пĕтĕмпе 2100 штук. Енчен те чирленине, инвалидноç пирки е урăх сăлтава пула хăйсен суйлав участокне пыраймаççĕ пулсан, кун пек суйлавçăсен декабрĕн 2-мĕшĕнче çакăн çинчен 16 сехетрен кая юлмасăр суйлав участокне шăнкăравласа е заявлени çырса суйлав участокне пымасăрах сасăламашкăн май туса пама ыйтмалла.

Асилтеретĕп, суйлава паспортпа пымалла. Вăл çук пулсан, вăхăтлăх удостоверени илмелле. Хăвăр шанакан парти тĕлне – сылтăм енчи тăваткала паллă тумалла. Суйлав участокĕсем суйлавçăсене ыран 8 сехетрен пуçласа 20 сехетчен кĕтеççĕ. (Вĕçĕ 6-мĕш стр.).

Республика кунне хатĕрленсе

## Ял илемĕ – район тĕкĕрĕ

Пурнăç малаллах шăвать. Юлашки çулсенче районта палăрмалла чылай çĕнĕлĕхсем ĕçе кĕчĕç. Халĕ килĕрен тенĕ пекех çут çанталăк газĕпе усă кураççĕ. Хуçалăхра вутă-шанкăпа сайра-хутра кăна усă куратпăр. Ĕлĕкхи пек вутăпа кăмака хутса апат-çимĕç хатĕрлеместпĕр, кил-çурта ăшăтмастпăр. "Кăвак çулăм" кĕртнипе чăнах та ял çыннин ĕçĕ самях çăмăлланчĕ, ытти ĕçсене пурнăçлама пушă вăхăчĕ те тупăнчĕ. Мĕн тери аван!

Ялсене çитсе курар-ха тата. Чăнах та ĕçлеме маттур ентешсем. Пурнăçĕ йывăр тетпĕр те, çапах та ырми-канми тăрăшакан хăйĕн хуçалăхне аталантарма мел çитерет, кил-çурт çавăрать тата ытти те. Çакна асăрхатăн: кирек хăш ялта та çуртсене кирпĕчрен хăпартаççĕ. Пĕр хутли кăна мар, икĕ хутлисем те пур. Çурчĕсем вара пĕри тепринчен илемлĕ, керментен те кая мар. Кашни çурт çинче тенĕ пекех тӳпенелле телевизор антеннисем кармашаççĕ. Ку çеç-и тата? Холодильниксĕр пуçне тата çăмăл автомашина тата ытти техники те пур. Çакă мар-и-ха ял çынни тулли пурнăçпа малалла ăнтăлнине тепĕр хут яр уççăн çирĕплетсе параканни.

Ял тăрăхĕсенче çавăн пекех хăтлă шкулпа культура вучахĕн çурчĕсем, фельдшер пункчĕпе магазин, ача сачĕ те пур. Вĕсем те хăтлă, кăмăла çĕклеççĕ.

Районти ял ĕçченĕсем хăйсен хушма хуçалăхĕнче улма-çырла, пахча çимĕç çитĕнтерме тăрăшаççĕ. Килĕрен тенĕ пекех сад ешерет. Çуркунне унти йывăççем "симĕс тум тăхăнсан", чечеке ларсан, тавралăха илем кӳреççĕ, кĕркунне вара çимĕçпе савăнтараççĕ.

Çапла, тирпей-илемлĕ яла тулли кăмăлпа тухса çӳреме те аван. Анчах та пур чухне те çакăншăн хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тăватпăр-и-ха? Çак ыйту канăç памĕ чылайăшне. Кун пирки сăмах хускатнă май, ачалăх çулĕсем аса килеççĕ. Сăлтавĕ те çук мар. Вăл вăхăтра ял çыннисем, сăмахран, урамсене тирпей-илем кĕртес тĕлĕшпе ытларах тимлетчĕç. Çуркунне, уй-хирте ака-суха ĕçĕсем вĕçленсен, çавăн пекех Троицăпа Питрав уявĕсем умĕн, тата ытти вăхăтра та ял çыннисем урамсене çӳп-çапран тирпейлетчĕç, шыв-шур çурса кайнă вырăнсене йĕркене кĕртетчĕç. Çак ĕçрен вара нихăш çемье те пăрăнса юлман. Урамри йĕркесĕрлĕхшĕн ял-йыш умĕнче ята ярас темен. Эпир, пĕчĕккисем, çу кунĕсенче аслатиллĕ çумăр хыççăн çара уран урампа чупаттăмăр.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).